**Аслă ушкăнри ачасемпе „ Майкка аппа патĕнче хăнара“**
**темăпа иртternĕ заняти конспекчĕ**

**Хатĕрлекенĕ Канаш районĕнчи**
**Чакаçри „Салтак тӳми“ хутăшла ача сачĕнче ĕçлекен**
**Васильева Светлана Алексеевна воспитатель**

**Ум сăмах**

Шкул çулне çитмен ачасене пĕлӳ паракан муниципаллă бюджетлă вĕренӳ учрежденийĕн „Чăваш Республикин Канаш районĕнчи Чакаçри „Салтак тӳми“ хутăшла ача сачĕнче ĕçлекен Васильева Светлана Алексеевна аслă ушкăн валли ачасен тавракурăмне аталантарас тĕллевпе хатĕрленĕ „ Майкка аппа патĕнче хăнара“ темăпа иртternĕ заняти конспекчĕ. Çак темăна суйласа иличчен чи малтанах эпĕ ачасене чăваш халăх искусствипе паллаштаратăп. Вăл пуян та нумай енлĕ пулнине ăнлантарса паратăп. Унăн тĕп тĕслĕхĕсем – тĕрĕ, тĕртнĕ тĕрĕ, т.ыт.те. Чăваш халăхĕн капăрлăхĕн илемлĕхне курма вĕрентсе тата вĕсемпе киленме пĕлес пулать.

Чăваш халăхĕ ĕмĕрсем хушшинче пухнă пурлăха упраса хăварасчĕ тесе эпир хамăрăн ача сачĕнче пĕчĕк мини-музей те йĕркелесе янă. Чăваш халăхĕн авалтан пынă сăвă-юррисене, вăйă-ташшисене, чăваш эрешĕсене, тĕсĕн паллисене çирĕплетсе упраса хăварасчĕ тесе тăрăшатпăр. Хамăр ялта вылякан тĕрлĕ чăваш вăййисемпе паллаштаратпăр, выляттаратпăр.

**Аслă ушкăн валли ачасен тавракурăмне аталантарас тĕллевпе хатĕрленĕ**
**„ Майкка аппа патĕнче хăнара“ темăпа иртternĕ заняти конспекчĕ**

**Вĕренӳ тĕллевĕсем:**

-чăваш халăхĕ ĕмĕрсем хушшинче пухнă пурлăха упрама вĕрентесси;

-ачасен тавра курăмне аталантарасси: ĕлĕкхи пир тĕртмелли хатĕрсемпе, пир тĕртмелли станокпа паллаштарасси, ĕлĕкхи çăпата мĕнле тунине кăтартасси.

**Аталану тĕллевĕсем:**

- чăваш халăхĕн авалтан пынă сăвă-юррисене, вăйă-ташшисене, çирĕплетсе упраса хăварасси.

-авалтан пынă чăваш халăхĕн вăйă-ташшисене малалла аталантарасси (хамăр ялта вылякан «Кăвакалĕ чăмать-и», «Шĕ-шĕ-шĕшкĕлĕх» вăййăсене выляма хăнăхтарасси).

**Воспитани тĕллевĕсем:**

- чăваш халăхĕн капăрлăхĕн илемлĕхне курма вĕрентесси тата вĕсемпе киленесси.

**Маларах туса иртternĕ ĕçсем:**

- чăваш сăввисене, юррисене, вăййисене вĕрентни;

- чăваш тĕррисемпе, вĕсен пĕлтерĕшĕпе паллаштарасси;

- ачасене «Кантăр епле акаççĕ» вăйă урлă пире тĕртес умĕнхи ĕçсемпе паллаштарасси;

- пир тĕртмелли хатĕрсене илсе килсе йĕркелесе лартасси, станоксемпе паллаштарасси, ĕлĕкхи çăпата тумалли хатĕрсене (калăп, пушăт) хатĕрлесси;

- хамăр ялта вылякан тĕрлĕ чăваш вăййисене вĕрентесси.

**Кирлĕ хатĕрсем:**

- чăвашсен арçын, хĕр ачасен кĕписем,тухья;

-çăпатасем, калăп, пушăт (тĕрлĕ хатĕрсем);

-пир тĕртмелли станок;

-пир тăрăхĕсем.

**Ĕç йĕрки**

*«Шĕ-шĕ-шĕшкĕлĕх» вăйă пырать. Тăватă ачан япалисене илсе «сутнă» хыççăн («ку япалапа мĕн тăвас пулать») çыру илсе килсе параççĕ. Çырура Майкка аппа хăнана чĕнет.*

**Воспитатель:** Ачасем, пĕр кун эпир урамра Майкка аппана курнăччĕ, паян пирĕн пата Майкка аппа çыру çырнă. Вăл пире паян хăйĕн патне хăнана килме чĕнчĕ, каяс килет-и сирĕн хăнана? *(ачасен хуравĕ).* Хăнана каяс умĕн айтăр-ха апла пулсан хитре кĕпесене тăхăнар-ха (*воспитательпе ачасем чăваш кĕписене тăхăнаççĕ*).

*Залра ĕлĕкхи чăваш пӳрчĕ. Пӳртре тăрăхла сак, пукансем, сĕтел. Сĕтел çинче çăкăрпа тăвар, кăкшăм. Сак çинче ал ĕç тумалли хатĕрсем, çăпата тумалли хатĕрсем; пир тĕртмелли станок, ун çинче тĕртнĕ хатĕрсем. Кил хуçи пир тĕртмелли станок хушшинче ларать, пир тĕртет. Ачасем кĕреççĕ.*

**Воспитатель:** Сывлăх сунатпăр , Майкка аппа.

**Майкка аппа:** Сывлăх сунатăп. Кĕтнĕ хăнасем килчĕç иккен. Иртĕр, ларăр .

**Воспитатель:** Сире чăрмантартăмăр пуль-ха ĕçлеме.

**Майкка аппа:** Çук, чăрмантармастăр-ха эсир мана. Эпĕ сире, çамрăк ачасене, ĕлĕкхи пир тĕртмелли хатĕрсемпе мĕнле ĕçлемеллине кăтартас тетĕп. Эсир пир тĕртнине курнă-и ха? Ман алра пусма татăкĕсем. Пăхăр-ха, епле хитрен курăнаççĕ, темĕн тĕрли те пур манăн. Çакна «улача» пусма татăкĕсем теççĕ. Тытса пăхăр-ха, хăвăрăн çи-пуçа тытса пăхăр та, çак улача татăкĕсене тытăр. Сисетĕр-и, вĕсем урăхларах. Мĕншĕн тесен ĕлĕкхи çынсем, пирĕн ват асаннесемпе кукамайсем, çак пир тĕртмелли станокпа пир татăкĕсене тĕртсе хăйсем валли кĕпе е юбка, шăлаварсем тунă. Пирĕн ялта ытларах Каняшки йăхĕнчи хĕр арăмсем пит хитрен çӳретчĕç. Мĕншĕн тесен вĕсен йăхĕнче тĕрĕс, хитре кĕпе çĕлекен çĕвĕçĕ пурччĕ, çавăнпа та вĕсен çи-пуçĕ питĕ тирпейлĕччĕ. Çакăн пек хитре кĕпесем, сурпан хатĕрсене хатĕрлетчĕç те кайран тĕрлесе тĕрлĕ сурпансемпе çӳретчĕç (*Сурпана епле тунине ăнлантарать*).

Çак пир станокĕпе тата хулăм çипсемпе урайне сармалли, сак çине сармалли пир тăрăхĕсем те тĕртнĕ. Ак çакăнти япаласене пăхăр-ха (*кăтартать*).

Паян эпĕ сире пир тĕртсе кăтартас тетĕп. Мĕнле-ха çавăн пек улача кĕпе пулать? Килĕр-ха кунтарах (*Пир епле тĕртнине ăнлантарса парать*).

Ачасем, çак япали мĕн ятлăччĕ-ха? Хĕçĕ мĕн тума кирлĕччĕ-ха? Тĕртнĕ пиртен мĕн-мĕн тăваççĕ? Улача тăваткал кĕпесене хăçан тăхăнаççĕ?

*(ачасен хуравĕ)*

Кам ларса пир тĕртсе пăхасшăн? (*2-3 ачана пулăшать, вĕрентет*)

Çак улача пир тăрăхĕсене эпĕ садике парне парса ярасшăн.

**Воспитатель:** Тавтапуç .Сирĕн мăшăр Йенкĕ пичче ăçта кайнă-ха тата?

**Майкка аппа:** Чĕке ту çине япала хума кайрĕ-ха вăл, темскер ун ури ыратса кайрĕ те.

**Воспитатель**: Мĕншĕн унта çити кайрĕ тата?

**Майкка аппа:** Каласа парам-ха апла.(*Чĕке ту çинчен каласа парать*). Пурте илтнĕ ĕнтĕ Чĕке ту тенине. «Чĕке» вăл чăваш сăмахĕнче виçе пулать, пысăк мар виçене калаççĕ, çӳллĕ мар тусене вара Чĕке ту тесе калаççĕ. Пирĕн Чăваш çĕр-шывĕнче вара Чĕке ту текен вырăнсем пĕрре çеç мар. Пирĕн ялтан инçех мар Аслă Мамине кайнă çĕртре çӳллĕ ту пек вырăн пур, çавăнпа ăна Чĕке ту теççĕ.

Ĕлĕк, православи тĕнне ĕненес умĕн, Чĕке ту çырминче кĕпер пулнă. Çак кĕпер урлă Шăхасана каймалли çул пулнă. Кĕпер айккиннче вара Киремет йывăççи *(йăмра е урăх йывăç*) ларнă, унта вара япаласем хăварнă (*çӳлти турăсене панă,)* тĕртнĕ ал шăллисем çакнă, укçасем пăрахнă. Халĕ çак кĕпер çук, анчах та çавăнта япаласем тупсан илме юрамасть, питĕ хытă та шавлама юрамасть теççĕ. Çавăнпа та хуть мĕн ыратсан е пулсан çав тĕле тĕрлĕ апат-çимĕç е тĕрлĕ япаласем кайса хураççĕ, вăхăтран вара çав ыратни иртсе каять, тĕлĕнмелле. (*Йенкĕ пичче кĕрет*).

**Йенкĕ пичче:** Сывлăх сунатăп сире ачасем. Пĕчĕк хăнасем килнĕ иккен кунта. Мана кĕтсе ывăнтăр та пуль.

**Майкка аппа:** Эпĕ ачасене пир тĕртнине кăтартрăм-ха. Çамрăк чух ман мăшăр йăхĕсем питĕ чаплă çăпата тăватчĕç. Çăпата тăпăл-тăпăл пурте тума пĕлмеççĕ, çак Ярли йăхĕнчи арçынсем вара питĕ ĕçченччĕ, çавăнпа та эпĕ ăна качча тухнă. Çак çамрăк ачасене çăпата епле тунине  кăтарт-ха, тархасшăн.

**Йенкĕ пичче:** Юрĕ апла. Халĕ çăпата тăвакансем сахал ĕнтĕ. Халĕ çăпатапа çÿреместпĕр те-ха. Килĕр-ха ман патăмарах. Çăпата тăвиччен малтан çын урине виçсе калăпне виçине хатĕрлеççĕ. Ун хыççăн çăпатана пусĕнчен тума пуçлаççĕ.

*( Çăпата мĕнле тунине кăтартать).*

Çăпата пуçĕ ăçта-ха? Çăпата кантри хăшĕ-ши? Кам çăпатана тĕрĕс тăхăнма пĕлет? (*тĕрĕс тăхăнма вĕрентет*). Сире валли ман пĕчĕк çăпатасем те пур, тăхăнса пăхăр-ха.

**Воспитатель**: Ачасем, айтăр-ха çак çăмăл çăпатасемпе ташласа пăхар-ха.

*Ачасем «Çăпата ташши» ташлаççĕ.*

**Майкка аппа:** Ай, маттур та, ачасем. Ытла та хитре ташлатăр. Манăн та сире хамăр ача чухне вылянă вăййа вĕрентес килсе кайрĕ. Вăйă ячĕ «Кăвакалĕ чăмать-и» (*Ачасене каласа ăнлантарать, выляççĕ*).

**Воспитатель**: Тавтапуç сире. Мĕн чухлĕ çĕнни пĕлтĕмĕр.

**Майкка аппа:** Хăвăр та маттур эсир ачасем. Сире валли эпĕ кукăль пĕçернĕччĕ-ха. Килсе ларăр, хăналанăр. Чейпе кукăль тутлă пулаканччĕ. Апачĕ тутлă пултăр (*Хăналанаççĕ*).

**Воспитатель**: Тавтапуç сире, сывлăхпа пурăнăр. Пирĕн садике кайма вăхăт. Пирĕн пата та хăнана килсе çÿрĕр. Сывă пулăр, чипер пурăнăр.

## Пĕтĕмлетÿ

Майкка аппапа Йенкĕ пиччене тав сăмахĕ калас килет, вĕсем ялти сумлă ватă çынсем. Ачасене тĕплĕн, ăнлантарса пачĕç. Вĕсем пулăшнипех пир тĕртмелли хатĕрсене илсе килсе йĕркелесе лартса пир тĕртмелли станоксемпе паллаштартăмăр, ĕлĕкхи çăпата тумалли хатĕрсене (калăп, пушăт) хатĕрлесе ачасене кăтартрăмăр. Малашне те хамăр ялта вылякан тĕрлĕ чăваш вăййисене вĕрентсе, чăваш халăх сăввисене, юррисене, вăййисене вĕрентĕпĕр, чăваш тĕррисемпе, вĕсен пĕлтерĕшпе паллаштарăпăр.

Ачасем хăнана кайса килнине, мĕн курнине ашшĕ-амăшĕсем умĕнче каласа пачĕç. Вĕсен тулли кăмăлне курнă май, çакăн евĕрлĕ занятисем чăваш халăх искусствипе паллаштарса татах та ытларах ирттермелле тесе эпĕ шутлатăп.

## Усă курнă литература


**1.** Ачасене шкулччен вĕрентмелли программа / Л.В. Кузнецова т. ыт. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренÿ институчĕн издательстви, 2009. – 367 с.

**2.** Артемьева Т.В. Чăваш ача садĕнче тăватă çулхи ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарасси / Т.В. Артемьева, С.Г. Михайлова. - Шупашкар: И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ, 2014.-143с.

**3.** Артемьева Т.В. Чăваш ача сачĕсенче вăтам ушкăнри ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарасси / Т.В. Артемьева, С.Г. Михайлова. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016.-143с.

**4.** Артемьева Т.В. Ачасене шкулччен вĕрентмелли тĕслĕх программа. Пуплеве аталантарасси. Илемлĕ литературăпа паллаштарасси. Вырăс (тăван мар) чĕлхине вĕрентесси / Т.В. Артемьева, С.Г. Михайлова, Н.В. Иванова.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015.-95с.

**5.** Артемьева Т.В. Чăваш ача сачĕсенче иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарасси / Т.В.Артемьева, С.Г. Михайлова.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015.-96с.

**6.** Васильева Л.Г. Программа этнохудожественного развития детей 2-4 лет «Узоры чувашской земли»: примерная парциальная образовательная программа / Л.Г. Васильева. - Чебоксары: Чуваш.кн.изд-во, 2015.-86с.

**7.** От рождения до школы. Примерная общеобразовательная программа дошкольного образования / Под ред. Н.Е. Вераксы, Т.С. Комаровой, М.А. Васильевой. – 3-е изд. испр. и доп. – М: МОЗАИКА-СИНТЕЗ, 2014. – 368 с.

**8.** Çăлкуç. Родник: хрестоматия. - Чебоксары: Чувашский республиканский институт образования, 2006.-228с.

**9.** Чăваш халăх искусстви / Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд-ви. 1981ç.

Федеральный государственный образовательный стандарт дошкольного образования. Приказ Министерства образования и науки РФ от 17 октября 2013 г. № 1155 (зарегис-но в Минюсте РФ 14 ноября 201